27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
31
ЫТЛАРИКУН
215(6710) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 28-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фронтӗн ҫарӗсем ҫапӑҫса наступлени туса пынӑ. ПЕТСАМО (Печенга) облаҫӗн территорийӗнче МАЯТАЛО, НАУСТИ ялсене тата НОРВЕГИ ҫӗрӗнче БУХОЛЬМ, СТОНГА, ВЕЙНЕС, ЛИЛЛЕБЕККЕН, МУНКЭЛЬВЕН, АНЬЕЛЬФЬЕЛЛЬ, НЕЙДЕН ялсене туртса илнӗ.

ВАРШАВА хулине юнашар ларакан ПРАГАРАН сурӗр-хӗвелтухӑҫӗнерехре пирӗн ҫарсем, Польшӑн 1-мӗш ҫурӗн ҫаксенче пӗрле кӗрешсе, тӗлӗӗн-тӗлӗӗн ҫапӑҫнӑ. ЯБЛОННА-ЛЕГИОНОВО хулине чугун ҫул станцине тата КОМОРНИЦА, ЦЕГЕЛЬНЯ, СТАНИСЛАВУВ, ЮЗЕФУВ, ЯБЛОННА ялсене туртса илнӗ.

ЧЕХОСЛОВАКИ ҫӗрӗнче УЖГОРОД хулинчен сурӗререхре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла талпӑна пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра ЧУКАЛОВЦЕ, ЯЛОВА, КЛЕНОВА, УБЛЯ, СТРИХОВЦЕ, ПОДГРАДЬЕ, ГУСАК, СЕЙКОВ, ЗАГОР, ЛЕКАРД, МАЛАЯ ДОБРОНЬ, ВЕЛИКАЯ ДОБРОНЬ, БАТЕВО, ЗАПСОН ятлӑ пысӑк ялсем тата ТАРНОВЦЕ, БАТФА, БАРКАСОВО, БАТЕВО, ШОМКОСИНО ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Венгри ҫӗрӗнче САТУ-МАРЕ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — НАДЬ-ДОБОШ, ПУСТА-ДОБОШ, МАТЕСАЛКА, ХОДАС, НЬИР-БАТОР, НЬИР-БОГАТ ятлӑ пысӑк ялсем тата НАДЬ-ДОБОШ, МАТЕСАЛКА, НЬИРБАТОР, НЬИР-БОГАТ чугун ҫул станцийӗсем.

ЮГОСЛАВИ ҫӗрӗнче БЕЛГРАД хулинчен сурӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, Югославин халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн ҫарӗсемпе пӗрле тӑшманпа хирӗҫ ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — Дунай ҫинчи АПАТИН хулине, РУМА хулине чугун ҫул станцине тата КУПСИНА, СВИЛОЕВО, СОНТА, КАРАВУКОВО, БАЧ, ТОВАРИШЕВО, КЛЕНАК, ГРАБОВЦИ ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведкӑсем шырса ҫӳренӗ тата тӗлӗӗн-тӗлӗӗн ҫапӑҫнӑ.

Октябрӗн 27-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 112 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитлӑ артиллери тӑшманӑн 52 самолетне персе ӳкернӗ.

ОКТЯБРӖН 29-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

ЧЕХОСЛОВАКИ ҫӗрӗнче УЖГОРОД хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем вӑйлӑ ҫапӑҫса хыҫҫӑн ЧОП хулине чугун ҫул узелне туртса илнӗ.

ВЕНГРИ ҫӗрӗнче САТУ-МАРЕ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла талпӑна пынӑ. НЬИР-ПАРАСНЬЯ, ПАПОШ, ОР, ЯРВИ, КАНТОРЬЯНОШИ, ДЕРД, ДЬЮЛАЙ, МАРИ-А-ПОЧ, ПОЧ-ПЕТРИ, КОЛЛО-ШЕМЬЕН ялсене тата МАРИА-ПОЧ чугун ҫул станцине илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведкӑсем шырса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗлӗӗн-тӗлӗӗн ҫапӑҫнӑ.

Октябрӗн 28-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 88 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитлӑ артиллери тӑшманӑн 15 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Чехословакири Ужгород хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса наступлени туса пынӑ. Чоп хулине чугун ҫул узелне тӑшман оборони тӗрекӗ пахапа пахчӗ вӑл. Чоп хули Тисса шывӗпе Латорица шывӗ хушшинче вырнаҫнӑ. Ҫавӑнпа та наступлени туса пыракан совет ҫарӗсене хулана аякран кайса ҫапма кирлӗ пулнӑ. Ужгород хулинчен пырса кӗрекен шоссе ҫулӗсемпе чугун ҫулсен тӗрӗслӗхне ҫавӑн пекех тата хула хутламӗсене те ытларахушӗн вӑйлӑ оборона сооруженийӗсем туса тултарнӑ. Тӑшман ҫав сооруженийӗсене ҫӗнӗ ҫӗнӗ хушса пынӑ, вӑл унти участокра 8-мӗш пехотнӑй дивизи, танковӑй тата ытти специальнӑй частӗсем те илсе пынӑ та подгрупа кӗртсе пынӑ. Чоп хули Чехословаки урлӑ пыракан чугун ҫул узелӗ пулса тӑрать. Унтан тухакан ҫулсем Сурӗр Трансильванине, Будапешт районӗсене каяҫҫӗ. Тытӑҫа лекнисем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, нимӗҫсемпе венгерсен ҫарӗсене Чоп хулине кирек мӗн пулсан та хӑйсен аллинче тытса тӑма приказ панӑ.

Пирӗн ҫарсем, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, тӑшман оборонине ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Унтан вӗсем Чоп хулинчен кӗрсе хула урамӗсенче ҫапӑҫма пуҫланӑ. Нимӗҫсемпе венгерсем хула кӑнтӑр чул ҫуртсене ҫирӗплӗнсе ларнӑ, чартаксенче тата подвалсенче вӗсем хайхи пулеметсем лартнӑ. Пирӗн ҫарсем хӑйсен кан пехичек ушкӑнсене пайланса кӗрешсе, ҫуртсене вӑркӑна-вӑркӑна кӗнӗ, тӑшман пулеметчикӗсене тата снайперӗсене гранатӑсемпе тата штыксемпе пӗтере-пӗтере тӑкнӑ. Мӗн кӑҫ пуличченех ҫапӑҫнӑ. Пирӗн ҫарсем тӑшман гарнизонне темиҫе ушкӑна уйӑрса янӑ та ҫавӑрса илнӗ, вара хаяррӑн ҫапӑҫса

машина тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ тиенӗ обоз тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫ ҫарӗсем Совет Союзӗн Германи фронтӗнче ҫав тери пысӑк сухатусем тӳснӗ пирки гитлеровецсем халь тем туса та хатӗр. Нимӗҫсен командованийӗ авиаци шкулӗсене хупа-хупа лартать, вӗсенчи курсантсене фронта — пехота чаҫӗсене ярать. Нимӗҫсен 551-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 1.113-мӗш полкран тытӑна лекнӗ ефрейтор Герберт Шварц ҫапла каласа кӑтартнӑ: «551-мӗш пехотнӑй дивизине Торн хулинче организацилерӗҫ. Дивизи хӑйӗн подразделенийӗсене авиаци шкулӗсене улшӑнпа курсантӗсенчен тунӑ. Летчик, истребительсен хатӗрлекен тӗп шкулсем тата ытти шкулсем тытӑмне пехотӑна кӗртнӗ. Пӗр хӑйа дивизине 500 ҫын килнӗ». Нимӗҫсен 551-мӗш пехотнӑй дивизийӗн штабӗнчен тытӑна лекнӗ унтер-офицер Иозеф Юнер ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ 5 ҫул хушши Гагенау хулинчи летчик-наблюдательсен шкулӗнче планер ҫӗ тӗлӗшпе инструктор пулса ӗҫлерӗм. Халь ҫав шкула хупрӗҫ те шкулти ҫынсене пурне те Торн хулинчи сборнӑй лагере ячӗҫ. Часах ҫак лагере мӗн пур летчиксене те летчик-наблюдательсен, борт-стрелоксен тата борт-радистсен хатӗрлекен шкулсенчи курсантсене ситрӗҫ. Вара пире пурне те 551-мӗш пехотнӑй дивизие ячӗҫ».

Нимӗҫсен 121-мӗш дивизийӗнчен тытӑна лекнӗ салтаксем хушшинче те авиаци шкулӗсене вӗренсе курсантсене кумай палартнӑ. Вӗсем Померание, Одер ҫинчи Франкфурт хулинчи тата ытти районсенчи авиаци шкулӗсенче вӗреннӗ пулнӑ.

Нимӗҫсен 121-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 407-мӗш полкран тытӑна лекнӗ салтаксем Гейнц Шрейк, Руди Блошке тата Гельмут Шуман ҫапла каласа кӑтартнӗ: «Эпир Швайнц шкулӗнче вӗренеттӗмӗр. Июль уйӑхӗнче пире вӗренӗве пӗтерме ирӗк памарӗҫ те вӑҫӗ ҫине кӑна юланӑҫ, сасартӑк пирӗн шкула хупса лартрӗҫ. Шкулта вӗренекенсене пурне те лагере ячӗҫ те пехотинецсем туса вӗрентме пуҫларӗҫ. Часах Балтика тӑрӑхне ячӗҫ те тӗрлӗ дивизисем тӑрӑх валеҫрӗҫ. Летчиксене ҫав тери нумай пехотӑна ян пире тӗлӗнтерсе, хӑратса ячӗ. Эпир нимӗҫсем ҫарӗн ларуҫ тӑрӑх пӗлсе пынӑ ҫитнине ӗнланса илтӗмӗр, малалли хӗрӳлӗ пӗр усӑҫ пуласси те ҫук».

* * *

Венгри ҫӗрӗнче Сату-Маре хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ, малалла куҫса пырса, Ньир-Парасньа яла туртса илнӗ. Ньир-Батор ял районӗнче нимӗҫсемпе венгерсем темиҫе хут контратака пуҫласа пынӑ. Хаяр ҫапӑҫусем пулнӑ. Ҫав ҫапӑҫура тӑшмана хӑй малалла кайнӑ. Кӑҫ пулса иртнӗ ҫапӑҫупа лакса кайнӑ. Кӑҫ пулса иртнӗ ҫапӑҫупа тӑшмана флангран пырса ҫапнӑ та калла ывӑтса янӑ. Совет боецӗсем, тӑшмана хӑваласа пырса, 10 километр малалла кайнӑ та Мариа-Поч чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсемпе венгерсен 600 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем мӗнпур участоксенче 500 нимӗҫпе венгерз ҫити тыткӑна илнӗ. Пӗр стрелковӑй часть кӑна 5 тупӑ, 12 миномет, 29 пулемет, боеприпас склачӗ, 3 радиостанци, 30 авто-

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзӗн Маршалне И. В. СТАЛИНА

Господин Маршал Совет Союзӗпе Чехословаки хушшинчи килӗшӳре каланӑ пек, эпӗ Чехословаки правительствин делегачӗ пулса, пирӗн государствӑн никама пӑхӑнманлӑхӗн кашни ҫулхи праҫникӗ кунӗнче — 1944 ҫулхи октябрӗн 28-мӗш кунӗнче — Чехословаки республикин ирӗке кӑларнӑ районӗсенче влаҫа хам ҫине илтӗм. Ҫак паллӑ кун эпӗ Сире тата Эсир ертсе пыракан паттӑр Хӗрлӗ Ҫара чунтан хисеплесе тав тӑватӑп. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Сиртен пӗтӗм Чехословакири халӑхсен ячӗпе Совет Союзӗнчи пур тӑванла халӑхсене те чунтан-вартан хисеплесе пысӑк салам калама ыйтатӑп, мӗншӗн тесен Совет Союзӗнчи тӑванла халӑхсем пурте нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ мӗнпур вӑйпа ҫапӑҫни пире хамӑр юратакан тӑван ҫӗршыва тавӑрӑнма май туса пачӗ.

Чехословаки Правительствин делегачӗ **Ф. НЕМЕЦ.**

Карпат тӑвӗсен леш енӗ.

ТАСС пӗлтерни

Ют ҫӗршыв хаҫачӗсем — ҫитес ноябрь уйӑхӗн пӗрремӗшӗнче Чикаго хулинче граждӑнла авиаци ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе уҫӑлакан пӗтӗм тӗнчери конференцире Совет Союзӗн представителӗсем те пулаҫҫӗ, тесе ҫырса пӗлтерчӗҫ.

ТАСС ҫакна пӗлтерме полномочи илнӗ: ҫав хыпарсем пачах та тӗрӗс мар. Юлашки кунсенче паллӑ пулнӑ тӑрӑх, ҫав конференцие Швейцари, Португали тата Испани представителӗсене те чӗннӗ. Совет Союзӗ вӑл государствӑсемпе дипломатиллӗ ҫыхӑнусем тытмасть, мӗншӗн тесен вӗсем нумай ҫулсем хушши Совет Союзне хирӗҫ, фашистсем майлӑ политика тытса пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа та Совет Союзӗ асӑннӑ конференцие хутшӑнмасть.

СССР Совнаркомӗнче

1944 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшӗ (ытларикун) тата ноябрӗн 8-мӗшӗ (юнкун) ӗҫ кунӗсем пулманнине кура, СССР Совнаркомӗ, ӗҫ ҫыннисем йышлӑн ыйтнипе килӗшсе, 1944 ҫулхи ноябрӗн 5-мӗшне — вырсарникуна — ӗҫлемелли кун тесе шутламалла тунӑ.

Ганс Круус — Эстони ССР-ӗн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ

ТАЛЛИН, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Эстони ССР-ӗн Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх Ганс Круус профессора Эстони ССР-ӗн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

ЭСТОНИРЕ ШКУЛСЕМ ҪӖНӖРЕН УҪАЛАҪҪӖ

Таллин хулинчи пуҫламӗш шкулсемпе вӑтам шкулсенче — пурӗ 20 шкулта вӗренме пуҫланӑ. Ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне ытти шкулсем те уҫӑлаҫҫӗ.

Республикӑн Харьвюски, Выруски тата ытти уезчӗсенче те шкулсем ҫӗнӗрен уҫӑлаҫҫӗ. (ТАСС).

Совет Союзӗн Маршалӗ К. А. Мерецков

ҪЕРУЛМИ НИХАҪАНХИНЧЕН ТЕ НУМАЙРАХ ТУХНА

Уралта Свердловск облаҫӗнчи Ачит районӗнчи «Заря» колхозӑн звеньевойне Ольга Орловӑна нумайӗшӗ пӗлеҫҫӗ. Вӑл пахча-ҫимӗҫсене нумай туса илекен мастер пулса тӑрать. Вӑл кӑҫал опытлӑ участокра нихӑҫанхинчен те нумайрах ҫӗрулми туса илнӗ. «Берлихинген» ятлӑ пысӑк тухӑҫлӑ ҫӗрулми 20 килограмм лартнӑ вырӑнта вӑл 32 центнер ҫӗрулми кӑларнӑ.

Ҫавӑн пек чаплӑ ҫитӗнӗве вӑл ҫав участока питӗ тӑрӑшса пӑхнипе тунӑ. Ытти лаптӑксенче унӑн колхозӗ гектартан 300-шер центнер ҫӗрулми кӑларнӑ. (ТАСС).

ИРӖКЕ КӐЛАРНӐ РАЙОНСЕМ ВАЛЛИ КУҪСА ҪӲРЕКЕН ЭЛЕКТРОСТАНЦИСЕМ

Ленинградри пӗр завод ирӗке кӑларнӑ районсем валли куҫса ҫӳрекен электростанцисем тӑвать. 650 станци туса кӑларнӑ ӗнтӗ, вӗсене Украинӑна, Белоруссие, Эстонипе Латви ССР-ӗсене, Смоленска, Псков тата Новгорода янӑ. (ТАСС).

Болгарипе перемири ҫинчен Килӗшӳ туни

Октябрӗн 26—28-мӗшӗсенче Мускавра Совет Союзӗн, Великобританипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен представителӗсемпе Болгари правительствин делегацийӗ хушшинче Болгарипе перемири ҫинчен Килӗшӳ тӑвасси пирки калаҫусем пынӑ. Калаҫусене Совет Союзӗ енчен В. М. Молотов, А. Я. Вышинский, А. А. Лаврищев, К. В. Новиков, В. А. Зорин, А. С. Желтов генерал-полковник, Н. О. Абрамов контр-адмирал, Великобритани енчен — посол А. К. Керр господин тата союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс районӗнчи ҫарӗсен Верховный Командующин Представителӗ Д. Гаммель генерал-лейтенант, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем енчен — США ӗҫӗсен Поверенннӑйӗ — Д. Ф. Кеннон господин хутшӑннӑ.

Болгари представителӗсем пулса, калаҫусене Болгари Правительствин уполномоченнӑйӗсем — Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ П. Стайнов господин, портфельсӗр Министр Д. Терпешев господин, портфельсӗр Министр Н. Петков господин тата финанс министрӗ П. Стоянов господин хутшӑннӑ.

Октябрӗн 27-мӗшӗнчи ларура, перемири тӑвасси ҫинчен калакан Килӗшӗвӗн, Союзлӑ виҫӗ Правительство Болгарие сӗннӗскерӗн, проектне сӳтсе-явма тытӑнас умӗн Болгари делегацийӗн пуҫлӑхӗ Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ П. Стайнов ҫапла каланӑ:

«Болгари делегацийӗ перемири тунӑ май Болгари Правительствин ячӗпе ҫакна пӗлтерет: Союзлӑ Правительствӑсен — Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн, Совет Союзӗн тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ячӗпе Болгари Правительствине сӗннӗ перемири условийӗсене Болгари делегацийӗ йышӑнать.

Ҫакӑнпа пӗрле делегаци Союзлӑ Государствӑсен представителӗсене ҫакӑн ҫинчен пӗлтерме тивӗҫлӗ тесе шутлать: Болгарин Отечественнӑй фрончӗн ҫӗнӗ правительстви хӑйӗн программине пурнӑҫа кӗртес тесе, малтанхи кунсенчен пуҫласах активлӑн ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫавӑнпа та правительство Союзлӑ Государствӑсен проектӗнче палӑртнӑ чылай условисене пурнӑҫа кӗртме ӗлкӗрнӗ те ӗнтӗ.

Болгари Правительстви перемири условийӗсене питех те тӳррӗн пурнӑҫа кӗртме мӗнпур вӑйа хурассине хӑйӗн тӗп тивӗҫӗ тесе шутлать. Ҫак перемири Болгари Правительствине Болгарипе Пӗрлешнӗ Нацисем хушшинчи ҫыхӑнусене йӗркене кӗртме пулӑшӗ тата ҫав нацисемпе килӗштерсе ӗҫлес политика никӗсне хывӗ. Мирлӗ договор тӑвасчченех ирӗклӗхе юратакан, демократиллӗ халӑхсем хушшинче Болгари хӑйӗн тивӗҫлӗ вырӑнне йышӑнтӑр тесе, Болгари Правительстви хӑй умне Пӗрлешнӗ Нацисемпе килӗштерсе ӗлессине малалла аталантарса, тарӑнлатса пырас задача лартать. Пӗрлешнӗ нацисем ҫавӑн пек пӗрле ӗҫлесе тата пӗр-пӗрин интересӗсене сыхласа пырса, пӗтӗм тӗнчери ырӑ пурнӑҫа туса хурӗҫ.

Болгари Правительстви пурне те илтӗнмелле ҫакӑн ҫинчен калама пултарать: ҫав политикӑна пурнӑҫа кӗртме Болгари Правительстви хыҫӗнче пӗтӗм болгар халӑхӗ тӑрать, вӑл мирпе ирӗклӗх тата демократи принципӗсене парӑнса тӑрса, хӑй енчен перемири условийӗсем тӑрӑх йышӑннӑ обязательствӑсене тӗрӗс те таса чун-чӗрепе пурнӑҫа кӗртсе пырӗ.

Болгари Правительстви йышӑннӑ обязательствӑсене тата ҫак перемири условийӗсене ырӑ кӑмӑллӑн пурнӑҫа кӗртес ӗҫе ҫӑмӑллатас шутпа, Союзлӑ Правительствӑсем ҫак сӗннӗ проектӑн хӑшпӗр пункчӗсен содержанийӗ пирки хӑшпӗр тӗлӗшпе ӑнлантарса парас пулсан, Болгари делегацийӗ Союзлӑ Правительствӑсен представителӗсене питех те тав тунӑ пулӗччӗ».

Октябрӗн 27-мӗшӗнче Килӗшӗвӗн проектне малалла сӳтсе-явнӑ тата Болгари делегацийӗ ыйтнӑ тӑрӑх проектӑн хӑшпӗр статьисене ӑнлантарса панӑ.

Калаҫусем Болгарипе перемири ҫинчен тунӑ Килӗшӗве октябрӗн 28-мӗшӗнче алӑ пуснипе вӗҫленнӗ. Перемири ҫинчен тунӑ Килӗшӗве Совет Союзӗн, Великобританипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисем полномочи панӑ тӑрӑх Союзниксен Главнокомандованийӗн Представителӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Ф. И. Толбухин тата Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс районӗнчи Верховный Главнокомандующин Представителӗ Д. Гаммель генерал-лейтенант алӑ пуснӑ. Болгари енчен Килӗшӗве П. Стайнов, Д. Терпешев, Н. Петков тата П. Стоянов господинсем алӑ пуснӑ.

Килӗшӗвӗн текстне аялараха пичетлетпӗр.

Совет Союзӗн, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисем Болгари Правительствипе перемири ҫинчен тунӑ КИЛӖШУ

Совет Союзӗн, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисем Болгарипе вӑрҫакан мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисен ячӗпе сӗннӗ перемири условийӗсене Болгари Правительстви йышӑнать.

Ҫавӑнпа, пӗр енчен — Совет Главнокомандованийӗн представителӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Ф. И. Толбухин тата Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс районӗнчи ҫарӗсен Верховнӑй Командующийӗн представителӗ Джеймс Гаммель генерал-лейтенант, Болгарипе вӑрҫакан мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисен ячӗпе ӗҫ тӑвакан Совет Союзӗн, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисенчен тивӗҫлӗ полномочи илнӗскерсем, тепӗр енчен — Болгари Правительствин представителӗсем Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ П. Стайнов господин, портфельсӑр Министр Д. Терпешев господин, портфельсӑр Министр Н. Петков господин тата Финанс Министрӗ П. Стоянов господин, тивӗҫлӗ полномочи илнӗскерсем, ҫак условисене ҫырса алӑ пуснӑ:

1. А) 1944 ҫулхи сентябрӗн 9-мӗшӗнче Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫма пӑрахса тата 1944 ҫулхи сентябрӗн 6-мӗшӗнче Германипе, унтан 1944 ҫулхи сентябрӗн 26-мӗшӗнче Венгрипе ҫыхӑну тытма пӑрахса, Болгари ытти мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисене те хирӗҫ вӑрҫма пӑрахнӑ.

В) Болгари Правительстви Германин Болгарири хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене хӗҫпӑшалсӑрлантарма тата вӗсене тыткӑна лекнӗ ҫынсен шучӗпе союзниксен аллине пама сӑмах парать.

Болгари Правительстви ҫавӑн пекех тата Германипе унӑн союзникӗсен гражданӗсене Болгарире тытса чарма пулать.

С) Болгари Правительстви Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани пӗтӗмӗшлӗн ертсе пынипе усӑ курма юракан ҫӗр ҫинчи, тинӗсри тата сывлӑшри вӑйсене тытса тӑма тата вӗсене союзниксен аллине пама сӑмах парать. Ҫав вӑйсемпе Союзниксен территорийӗнче усӑ курма юрамасть, вӗсемпе унта тивӗҫлӗ Союзлӑ Правительство килӗшсен ҫеҫ усӑ курма юрать.

Д) Германие хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӗтерсе лартнӑ хыҫҫӑн Болгарин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене салатса ямалла тата Союзниксен Контроль Комиссийӗ сӑнаса тӑнипе вӗсене мирлӗ йӗркене куҫармалла.

2. Болгари Правительстви 1944 ҫулхи октябрӗн 11-мӗшӗнче йышӑннӑ малтанхи условисем тӑрӑх, Болгарин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене тата чиновникӗсене ҫав условире кӑтартнӑ срокра Греципе Югослави ҫӗрӗнчен илсе тухмалла; Болгари влаҫӗсем 1941 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне Болгари гражданӗсем пулнӑ болгарсене Греципе Югослави ҫӗрӗнчен куҫарса кайма халех кирлӗ мерӑсем йышӑнмалла тата Греципе Югослави ҫӗрне йышӑнас. Ӑна Болгари ҫумне хутшӑнтарас тӗлӗшпе кӑларнӑ законсемпе администрациллӗ йӗркесене пӑрахӑҫа кӑлармалла.

3. Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани вӑрҫӑ валли кирлӗ тесе шутласан, Болгари Правительстви совет ҫарӗсене тата ытти союзниксен ҫарӗсене Болгари ҫӗрӗ тӑрӑх кирек хӑш еннелле те куҫса ҫӳреме май туса парать. Болгари Правительстви вара ҫав ҫарсене ҫӗр ҫинче те, шыв тӑрӑх та, сывлӑшра та куҫса ҫӳреме хӑйӗн транспорт хатӗрӗсене парса пулӑшать, тата вӗсене хӑйӗн шучӗпе куҫарать.

4. Болгари Правительстви союзниксен мӗнпур тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене тата тытса чарнӑ ҫыннисене халех ирӗке кӑларать. Ҫӗнӗ инструкцисем иличчен Болгари Правительстви союзниксен тыткӑна лекнӗ мӗнпур ҫар ҫыннисене тата тытса чарнӑ ҫыннисене, вӑрҫӑ пыракан вырӑнсенчен куҫарса кайнӑ тата куҫса кайнӑ ҫынсене, ҫав шутра Греципе Югослави гражданӗсене те, ҫителӗклӗ апат-ҫимӗҫ, тумтирсем, медицина пулӑшӑвӗ тата санитарипе гигиена хатӗрӗсем парать, ҫавӑн пекех тата ҫав ҫынсенчен кашнине хӑйӗн государствине тавӑрӑнма транспорт хатӗрӗсем парать.

5. Пӗрлешнӗ Нацисене усӑ кӳрес тесе ӗҫленӗшӗн, е Пӗрлешнӗ Нацисене кӑмӑлланӑшӑн, е тата мӗнле расӑран тухнине кура е мӗнле тӗне тытса тӑнине кура хупса лартнӑ мӗнпур ҫынсене, вӗсем мӗнле ҫӗршывсен гражданӗсем тата мӗнле наци ҫыннисем пулнине пӑхса тӑмасӑр, Болгари Правительстви халех ирӗке кӑларать, ҫавӑн пекех тата тӗрлӗ нацисене хӗсӗрлекен кирек мӗнле законсене те тата ҫав законсем тӑрӑх тунӑ хӗсӗк условисене те пӑрахӑҫа кӑларать.

6. Вӑрҫӑра тунӑ преступленисемшӗн айӑплӑ ҫынсене тытса чарас тата вӗсене суд тӑвас ӗҫре Болгари Союзлӑ (Совет) Главнокомандованипе пӗрле ӗҫлет.

7. Болгари Правительстви Болгари территорийӗнчи Гитлер майлӑ ӗҫлекен тата фашистла ытти мӗнпур организацисене — политика тата ҫар организацийӗсене, ҫар майлӑ туса йӗркеленӗ организацисене, ҫавӑн пекех тата ытти организацисене те, Пӗрлешнӗ Нацисене хирӗҫ пропаганда тӑваканскерсене, халех салатса яма, малашне вара ҫавӑн пек организацисене уҫма пачах та чарса лартма сӑмах парать.

8. Болгарире вӑхӑтран вӑхӑта тата вӑхӑтсӑр тухса тӑракан литературӑна кӑларасси, илсе пырасси тата сарасси, театрсемпе киносем кӑтартасси, радиостанцисем, почта, тата телеграфпа телефон ӗҫлесси Союзлӑ (Совет) Главнокомандованипе килӗшсе татӑлнӑ тӑрӑх пулса пырать.

9. Болгари Правительстви Пӗрлешнӗ Нацисемпе вӗсен гражданӗсен харпӑрлӑхне, ҫав шутра Греципе Югослави харпӑрлӑхне те, каялла тавӑрса парать тата Пӗрлешнӗ Нацисене ҫав шутра Греципе Югославие, вӑрҫӑ кӳнӗ сиенсемпе тӑкаксене саплама укҫа парать; укҫа мӗн чухлӗ памаллине каярахпа палӑртса хураҫҫӗ.

10. Болгари Правительстви Пӗрлешнӗ Нацисен тата вӗсен гражданӗсен Болгарири мӗнпур прависемпе интересӗсене ҫӗнӗрен законлӑ туса хурать.

11. Совет Союзӗнчен, ҫавӑн пекех тата Греципе Югославирен тата Пӗрлешнӗ ытти Нацисен ҫӗршывӗсенчен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Германипе Болгари турттарса кайнӑ мӗнпур хаклӑ япаласемпе материалсене, государство, общество тата кооперации организацийӗсен, предприятисемпе учрежденисен е уйрӑм граждансен хаклӑ япалисемпе материалӗсене, уйрӑмӑн илсе кӑтартсан: фабрикӑсемпе заводсен оборудованине, паровозсене, чугун ҫул вагонӗсене, тракторсене, автомашинӑсене, историллӗ памятниксене, музейри хаклӑ япаласене тата ытти тӗрлӗ пурлӑхсене Болгари Правительстви Союзниксен Контроль Комиссийӗ кӑтартса панӑ сроксенче ҫав ҫӗршывсене пӗтӗмӗшпех юсавлӑн тавӑрса пама сӑмах парать.

12. Болгари Правительстви Германипе унӑн союзникӗсен Болгари ҫӗрӗнчи пӗтӗм ҫар пурлӑхне, ҫав шутра Германипе унӑн союзникӗсен Болгари шывӗсем ҫинчи суднисене те, трофейсем вырӑнне хурса, Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулать.

13. Болгари Правительстви Германипе Венгрин е вӗсен гражданӗсемпе ҫыннисен, вӗсен ҫӗрӗ ҫинче е вӗсем йышӑннӑ территорисенче пурӑнаканскерсен, кирек мӗнле пурлӑхӗсене те (вӑл шутра хаклӑ йышши япаласемпе валютӑна та), Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани ирӗк памасӑр, Болгарирен илсе тухма е вӗсене туртса илме памастӑп тесе сӑмах парать.

14. Пӗрлешнӗ Нацисен Болгари порчӗсенче тӑракан мӗнпур суднисене, вӗсем халь камӑн аллинче тӑнине пӑхмасӑр, вӗсемпе Союзниксен пӗрлӗхлӗ интересӗсемшӗн Германипе Венгрие хирӗҫ вӑрҫнӑ вӑхӑтра усӑ курмашкӑн Болгари Правительстви Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулать, кайран ҫав суднӑсене вара хӑйсен хуҫисене тавӑрса параҫҫӗ.

Ҫӳлерехре кӑтартнӑ пурлӑхсене Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин аллине паричченех вӗсене мӗнле те пулин сиенленӗшӗн е пӗтерсе тӑкнӑшӑн Болгари Правительстви пӗтӗмӗшпех хӑй материальнӑй ответ тытать.

15. Болгари Правительстви Союзлӑ (Совет) Главнокомандованине, хӑйӗн ӗҫӗсене тума кирлӗ пулма пултарнӑ таран, Болгари валютипе шутласа, укҫа тӳлесе тӑма тивӗҫлӗ, ҫавӑн пекех тата тӗрлӗ таварсем (горючи, апат-ҫимӗҫ тата ыт. те), хатӗрсем тата пулӑшу парса тӑма тивӗҫлӗ.

16. Болгарин суту-илӳ суднисем, Болгари шывӗсем ҫинче тӑраканнисем те, ют ҫӗршывсен шывӗсем ҫинче тӑраканнисем те, вӗсемпе Союзниксен пӗтӗмӗшле интересӗсемшӗн усӑ курмашкӑн Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин оперативнӑй контрольне пӑхӑнса тӑраҫҫӗ.

17. Болгари Правительстви Болгари территорийӗнчи промышленноҫпа транспорт предприятийӗсемпе, ҫавӑн пекех тата ҫыхӑну хатӗрӗсемпе, энерги паракан станцисемпе, предприятисемпе, общество усӑ куракан ҫуртӗсемпе, топливо тата ытти материалсем хунӑ складсемпе перемири вӑхӑтӗнче, кирлӗ пулсан, Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани кӑларнӑ инструкцисем тӑрӑх усӑ курма май туса парать.

18. Перемирин пӗтӗм тапхӑрӗ валли Болгарире Союзниксен Контроль Комиссине тӑваҫҫӗ. Вӑл перемири условийӗсене пурнӑҫа кӗртессине йӗркелесе пырать, тата вӗсене пурнӑҫа кӗртнине асӑрхаса тӑрать. Унӑн председателӗ Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин представителӗ пулать, унта Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн тата Пӗрлешӳллӗ Штатсен представителӗсем те хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ.

Перемири тунӑ хыҫҫӑн Германие хирӗҫ тӑвакан вӑрҫӑ ӗҫӗсем пӗтиччен Союзниксен Контроль Комиссине Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани пӗтӗмӗшлӗн ертсе пырать.

19. Ҫак условисем вӗсене алӑ пуснӑ

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем Болгари Правительствипе перемири çинчен тунă КИЛĔШӲ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

вăхăтран пуçласа законлă пулса тăраççĕ.

Çак Килĕшĕве Мускавра тăватă экземпляр хатĕрленĕ, кашнине вырăс, акăлчан тата болгар чĕлхисемпе çырнă, вырăс чĕлхипе тата акăлчан чĕлхипе çырнисем чăн тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

1944 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем полномочи панипе
Совет Главнокомандованийĕн Представителĕ
ТОЛБУХИН

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи Верховный Командующийĕн Представителĕ
Д. ГАММЕЛЬ

Болгари Правительстви полномочи панипе
П. СТАЙНОВ
Д. ТЕРПЕШЕВ
Н. ПЕТКОВ
П. СТОЯНОВ

Болгарипе тунă перемири Килĕшĕвĕ çумне хушса çырнă ПРОТОКОЛ

Болгари Правительствипе перемири çинчен Килĕшӳ туса алă пуснă чухне çав Килĕшĕве алă пуснă Союзлă Правительствăсем çакăн пирки калаçса татăлнă:

1. 9-мĕш статьяра каланă май çапла шутланă: Греципе Югослави çĕрĕнчи халăха, Болгари агрессипе пула асап курнăскерне, пулăшма Болгари Правительстви халех хăшпĕр йышши апат-çимĕç тăратать. Кашни продукта мĕн чухлĕ тăратмаллине виçĕ Правительство пĕр-пĕринпе калаçса татăлса кăтартса параççĕ, ăна вара Греципе Югославие сиен тунăшăн саплас шутпа панă хатĕрсен пĕр пайĕ тесе шутлаççĕ.

2. «Çар пурлăхĕ» тенĕ сăмаха, 12-мĕш статьяра асăннăскерне, çапла ăнланмалла: вăл тăшманăн çар е çурма çар соединенийĕсем е вĕсен членĕсем тытса тăракан, усă куракан е усă курма пухнă мĕнпур пурлăха е снаряжение пĕлтерет.

3. Болгари Правительстви перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 14-мĕш статьинче кăтартнă тăрăх таварса панă суднăсемпе (союзниксен суднисемпе) Союзлă (Совет) Главнокомандовани усă курасси çинчен тата вĕсене хăçан хăйсен хуçисене таварса памалли çинчен Совет Союзĕн Правительстви Союзлă Правительствăсемпе калаçса татăлать.

4. 15-мĕш статьяна пурнăçа кĕртнĕ чухне çапла ăнланмалла: Союзлă (Совет) Главнокомандовани Болгари валютине, снабженине, пулăшăвĕсене тата ыттисене те Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисен Болгарири представителĕсем валли те уйăрса хума кирлине шута илĕ.

Çак Протокола Мускавра виçĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнă, вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнисем пурте чăн тĕрĕс текстсем шутланаççĕ.

1944 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви полномочи панипе	Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Правительстви полномочи панипе	Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви полномочи панипе
А. ВЫШИНСКИЙ	Арчибальд Кларк **КЕРР**	**Джордж Ф. КЕННОН.**

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейи

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене мĕн чухлĕ сарнă

СССР Финанс Халăх Комиссариатĕнче укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене çĕнĕ виçĕ кун хушшинче чи пысăк промышленноç центрĕсенче, союзлă автономилле республикăсенче мĕн чухлĕ сарнине шутласа тухнă. Виçĕ кун хушшинче укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене пĕтĕмпех 3-мĕш лотерейăн билечĕсене [illegible] мĕн чухлĕ сарнă, çавăн чухлĕ сарнă.

Мускав хулинче [illegible] билечĕсене 42.500.000 тенкĕлĕх ытларах илнĕ. Ленинград хулинче пĕтĕмпех 12 миллион тенкĕлĕх илнĕ.

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсем Свердловскра, Новосибирскра тата ытти хуласенче те пысăк сарăлаççĕ.

Лотерея билечĕсене сарас ĕç союзлă республикăсенче кал-калăн пырать. Таджик ССР-ĕнче ĕççынисем укçапа япаласен лотерейин билечĕсене 15.500.000 тенкĕлĕх ытла илнĕ, Туркмен ССР-ĕнче 12 миллион тенкĕлĕх ытла, Грузи ССР-ĕнче 31 миллион тенкĕлĕх ытла, Киргиз ССР-ĕнче 20 миллион тенкĕлĕх ытла билет сыранса илнĕ. (ТАСС).

Пилĕк кунхи итогсем

Республикăра укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене 1944 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне 37.153 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 6.550 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 30.593 пин тенкĕлĕх сарнă.

Лотерея билечĕсен укçине колхозниксем хушшинче 18.254 пин тенкĕ пухнă. Лотерея билечĕсене сарас тата вĕсен укçине пухас ĕçре Октябрьски, Тăвай, Вăрмар, Канаш, Муркаш районĕсем малта пыраççĕ. Çак вăхăтрах Шăмăршă, Калинино, Элĕк, Вăрнар, Куракино районĕсенче лотерея билечĕсене сарасси, уйрăмах билетсен укçине пухасси çителĕксĕр хăвăртлăхпа пырать. Асăннă районсенчи парти тата совет организацийĕсемпе финанс работникĕсен билетсене сарас ĕçе вăйлатмалла.

Лотерея билечĕсене нумай пин тенкĕлĕх туянакан колхозниксем

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене сарас ĕçре республикăри нумай колхозниксем хăйсен патриотизмне тепĕр хут кăтартрĕç. [illegible] «Мотор» колхозри членĕ С. Халитов юлташ 4000 тенкĕлĕх, «Красный восток» колхоз председателĕ Д. Тенетов 3000 тенкĕлĕх, «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Акчурин юлташ 2000 тенкĕлĕх, çак колхозри членĕсем А. Козлова, А. Орешкина, М. Витрафова 1000-шар тенкĕлĕх туянчĕç. [illegible] пчеловод В. Воронцов 1.200 тенкĕлĕх, «Путиловка» колхоз председателĕ Тазенов 1000 тенкĕлĕх, çав колхозри членĕ, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ П. Тимофеев 800 тенкĕлĕх туяннă. Кун пек тĕслĕхсем ытти районсенче те нумай.

Лотерея билечĕсене колхозниксем тата рабочисемпе служащисем нумайăшĕ лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех парса татнă. Комсомольски районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз [illegible] 30 процентне чухлĕ ытла [illegible]. Çавăн пекех çак районри [illegible].

Ялти актив малти ретре

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Нумай колхозсем лотерея билечĕсене сарас ĕçре [illegible]. Тиньсарри ялсоветĕнчи «Чамыш» колхоз членĕсем 16.400 тенкĕлĕх, «Буксир» колхоз членĕсем 21.000 тенкĕлĕх, Яманак ялсоветĕнчи «Красный богатырь» колхоз членĕсем 10.400 тенкĕлĕх [illegible] пĕтĕмпех хывнă.

Лотерея билечĕсене сарас ĕçре ялти актив лайăх тĕслĕх кăтартать. «Чамыш» колхоз членĕ Егоров юлташ 1.200 тенкĕлĕх, «Буксир» колхоз членĕ В. Семенова Е. Петров 1000-шар тенкĕлĕх [illegible]. Лотерея билечĕсене 500-шар тенкĕлĕх туянакансен шучĕ нумай.

Кашни рабочие служащи лотерея билетне туянчĕç

КУСЛАВККА, октябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинат коллективĕ лотерея билечĕсене сарас ĕçре пысăк активлăх кăтартать. Комбинатри пур цехсен коллективĕсем [illegible] пайĕнчи хисепри нумайăшĕ сыранса илчĕç. Комбинатра пĕр билет туянман рабочисемпе служащисем пачах та çук.

В. КАРПОВ.

Пĕр миллион тенкĕ пухнă

ЧУРАЧАК, октябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксем колхозницăсем лотерея билечĕсене 1.400 пин тенкĕлĕх сыранса илчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ билет укçине çийĕнчех тӳлерĕç. Паянхи куна лотерея билечĕн укçине пĕр миллион тенкĕ ытла пухнă, перкет касса хывнă.

Государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕç

Красноармейски районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç 35 пин пăт параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Пур колхозсенче те Ярославль облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чĕнсе каланине сӳтсе-явасси пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Яманак ялсоветĕнчи колхозсем, çак пуçарăва йышăнса, Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç нумай пама йышăннă. Уйрăмăн илсен, «Красное Сормово» колхоз — 1.500 пăт, «Красный герой»—300 пăт, «Красный богатырь» колхоз — 180 пăт пама пулнă. Асăннă колхозсем паян çĕрулмие хатĕрлев пунктне леçме тытăнчĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне хăйсен запасĕнчи çĕрулмие паракан колхозниксемпе колхозницăсен йышĕ те ӳссех пырать.

Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пĕтĕмпе 35 пин пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç пама йышăннă. Çак çĕрулмипе пахча-çимĕçсене ноябрĕн 4-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне леçсе пĕтерме палăртнă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем хăйсен сăмахне пурнăçлаççĕ

ÇЕРПӲ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем, Ярославль облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнсе каланине йышăнса, Октябрь уявĕччен 37.000 пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулчĕç. Чылай колхозсем хăйсен обязательствине пурнăçа кĕртеççĕ ĕнтĕ. «Емĕт» колхоз 500 пăт, «Новая жизнь» колхоз 600 пăт, «Правда» колхоз 122 пăт кайса леçнĕ. Октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне районĕпе пĕтĕмпе 11.000 пăт çĕрулми хатĕрлев пунктне леçнĕ.

Нумай колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç хăйсен запасĕнчен параççĕ. Çапла, «Пионер» колхоз колхозникĕсем Петр Владимиров — 60 пăт, В. Окунев — 50 пăт, Я. Андреев — 45 пăт, «Балтиец» колхоз председателĕ Васильев — 60 пăт, «Глиссер» колхоз председателĕ 50 пăт панă.

Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç парас тĕлĕшпе хăйсем илнĕ обязательствăсене ноябрĕн 3-мĕшĕнче пурнăça кĕртсе çитересси шĕн кĕрешеççĕ.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Планран ирттерсе 33 пин пăт çĕрулми параççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри колхозсем Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе çĕрулми пама чĕнсе каланине пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яваççĕ. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, районĕпе 33 пин пăт çĕрулми пама йышăннă. Çичпӳртри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 1.500 пăт, Емпӳртри «Память Ленина» колхоз 1200 пăт, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 1200 пăт, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 960 пăт, «Красный Октябрь» колхоз 840 пăт çĕрулми параççĕ. Кутемер ялсоветĕнчи колхозсем (пурĕ 4 колхоз) кашниех 450-шар пăт параççĕ. Çак колхозсенчи колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ноябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулнă.

«Единство» колхозра ĕçлекен фронтовик Богатырев юлташ çапла каларĕ:

— Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем паха ĕç пуçарчĕç. Вĕсем чĕнсе каланине эпир, колхозниксем, чĕререн ырласа йышăнатпăр. Кăçал пирĕн тырпулпа çĕрулми ăнса пулчĕ. Çав тырăпа çĕрулмине эпир чи малтан Хĕрлĕ Çара парса пулăшăпăр, — терĕ.

Паян колхозсенчен 100-шер лав хатĕрлев пунктне çĕрулми тиесе кайрĕç.

В. ЯСТРЕБОВ.

Çĕнтерӳ сехетне çывхартма

ЕТĔРНЕ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсенче Ярославль облаçĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине сӳтсе-явас ыйтупа пухусем иртеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама йышăнаççĕ. Районри колхозсем пĕтĕмпе 500 тонна пама палăртнă. Нумай колхозсем çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлев пунктне турттарма тытăнчĕç. Паянхи куна 100 тонна ытла турттарнă.

Хăйсен запасĕнчен çĕрулмипе пахча-çимĕç Хĕрлĕ Çар фондне паракан колхозниксен хисепĕ те чылай пысăк.

А. СОМОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО, октябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче Ярославль облаçĕнчи колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнсе каланине пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яваççĕ. Нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕçсем леçме тытăнчĕç те ĕнтĕ. Ĕнер Кăмпалти «Новый путь» колхоз 60 центнер, Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхоз 80 центнер купăста леçнĕ. Çĕрулмипе купăста леçес ĕç Услапари «Броневик» тата Аçăм Çырмари колхозсенче те пуçланнă.

Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пĕтĕмпе 500 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулнă. Ăна ноябрĕн 7-мĕшĕччен хатĕрлев пунктне турттарса пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Уява пысăк çитĕнӳпе кĕтсе илессишĕн

ШАХАСАН. Кăçалхи çураки вăхăтĕнче Тури Сурăмри «Заря» колхоз кая юлса пыракансен шутĕнче тăнă. Çакă вăл пĕтĕмпех колхоз руководителĕсем ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлменнинчен, ĕçе çирĕп планпа, графикпа туса пырасси çине çиелтен пăхнинчен килнĕ. Инвентарьсене, машинăсене лайăх юсаса, йĕркелесе çитерменнине пула çуракинчи ĕçсем вăраха тăсăлнă, çавна пула вара ĕç пахалăхĕ те кирлĕ пек пулса пырайман. Çак çитменлĕхсене тĕплĕн шута илсе, «Заря» колхоза ертсе пыма Отечественнăй вăрçă инвалидне, Сталинград патĕнчи çапăçусенче пулнă паттăр гвардееца Никитин юлташа суйланă. Вăл, фронта кайиччен те колхоза ертсе пыракан вырăнсенче ĕçленĕскер, колхозри çитменлĕхсене тĕппипех пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлеме пуçларĕ. Вăл тăрăшнипе кунта, чи малтанах, правлени членĕсене пурне те ответлă ĕçсем парса тухнă. Çавăн пекех бригадирсене кашни ĕçе тума тытăнас умĕн тĕплĕ инструктаж парса пырассине йĕркеленĕ. Çавăн хыççăн вара пур бригадăсенче те, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх фермисенче те, тĕрлĕ ĕçсене пурне те малтан тĕплĕн пăхса тухса çирĕплетнĕ план-графиксем тăрăх туса пыма пуçланă. Çапла ĕçлени лайăх результатсем пачĕ.

«Заря» колхозра кăçал уйхирти тырпулсене вырса кĕртес ĕç самаях ăнăçлă пулса иртрĕ. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн малтанхи кунĕсенчех кунта колхозниксенчен кам та пулин, мĕнле те пулин сăлтавсене пула ĕçе тухманнине шута илсе пырса, çав колхозниксемпе уйрăмăн ĕçлеме, калаçусем ирттерме, вĕсене ĕçе тухма чăрмантаракан йывăрлăхсене пĕтерсе пыма, пулăшу пама тытăннă. Çапла ĕçлени, паллах, колхозăн производство планне вăхăтра пурнăçласа пыма питех те пысăк пулăшу пачĕ. «Заря» колхоз кăçал тырăсене вăхăтра пухса кĕртрĕ. Тырă вырнă вăхăтрах кĕлте кӳрессине, пĕр чарăнмасăр авăн çапассине йĕркеленине пула тырăсене вырса пĕтернĕ хыççăн тепĕр 5—6 кунтанах çĕмелсене анкартине кĕртсе капана хывса лартрĕç. Государствăна тырă леçсе пама кашни бригадăрах уйрăм сынсемпе лашасем уйăрнă, вĕсем пĕр кун сиктермесĕр тенĕ пекех, татти-сыпписĕр тырă леçсе тăчĕç. Çапла вара «Заря» колхоз сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна тырпул тăратмалли обязательствăна пĕтĕмĕшпех тултарчĕ, Хĕрлĕ Çар фондне 402 пăт тырă леçрĕ.

Иртнĕ çулсенче «Заря» колхозра выльăх-чĕрлĕх апачĕсем хатĕрлесси çине те çиелтен пăхнă, выльăх апачĕсем çитменнине пула иртнĕ çуркунне кунта выльăх-чĕрлĕхсем начарланса вилнисем те пулчĕç. Çакна шута илсе, кăçал колхозниксем утă-улăмсем çителĕклĕ таран хатĕрлес тесе, çине тăрса ĕçлерĕç. Пĕтĕмпе 324 тонна утă хатĕрленĕ, 140 тонна силос хывса хăварнă. Вĕсене ферма заведующи аллине акт çырса панă.

Иртнĕ çулсенче «Заря» колхозăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те питĕ пысăк çитменлĕхсем пулнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пурнăçа кĕртсе пыраймаи. Колхоз кăçал контрактаци йĕркипе 64 пăру илнĕ, сурăхсем илнĕ. Çапла вара хальхи вăхăтра колхозăн сыснасен шучĕпе çеç план тулайман, ăна тултарас пирки халĕ пикенсех ĕçлеççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ, витесене пурне те ăшăтнă, тасатнă. Кăçалхи çул путексемпе пăрусене хупмалли çĕнĕ вите туса лартнă.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе «Заря» колхоз пĕтĕмпе 200 гектар çинче кĕрхи çĕртме туса хăварчĕ. Кĕракине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа ирттернине пула кĕр калчисем питĕ тикĕс, лайăх шăтса тухрĕç.

Халĕ колхозра авăн çапас ĕç хĕрӳллĕн пырать. ВКП(б) членĕ И. Павлова юлташ ертсе пыракан 6-мĕш бригада пур тĕрлĕ культурăсене те çапса амбара кĕртрĕ. Ытти бригадăсем те çак кунсенчех çапса пĕтереççĕ.

Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту договорĕсем епле пурнăçа кĕрсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ. Ăмăртура Отечественнăй вăрçă инваличĕ Петр Дмитриев ертсе пыракан бригада малта пырать.

«Заря» колхозăн çитменлĕхсем те нумай-ха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарайман, тĕрлĕ ялхуçалăх инвентарĕсем çитменни те колхоза чылай чăрмавсем кӳрет.

Аслă уява хатĕрленнĕ май, тăван çĕршывпа фронта ĕçпе пулăшас туйăмсемпе çĕкленсе, «Заря» колхоз колхозникĕсем пур енчен те лайăх ĕçлекен колхозсемпе танлашас тесе ырми-канми ĕçлеççĕ.

С. АСЛАН.

КАУНАСРИ УНИВЕРСИТЕТРА ВĔРЕНТМЕ ПУÇЛАНĂ

Виçĕ çул хушши хупăнса тăнă хыççăн Каунасри университетра вĕрентме пуçланă. Тăватă факультетра пин студента яхăн аудиторисемпе лабораторисене кĕрсе вырнаçнă.

Нимĕçсем, литовецсен культурине пĕтерсе лартма тăрăшса, çав университета хупнă пулнă, студентсене чылайĕшне Германие каторгăна хăваласа кайнă. Каялла чакнă чухне фашистсем физикăпа математика факультечĕн çуртне ишсе хăварнă, университетăн пуян лабораторийĕсене çаратса кайнă. Халĕ, студентсемпе профессорсем активлăн пулăшнипе, университета юсаса хута янă. (ТАСС).

ПОСЕЛОКСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЕ ЮСАСА ЙĔРКЕНЕ КĔРТНИ

Свердловск облаçĕнчи рабочи поселоксемпе район центрĕсене тĕплĕн юсаса йĕркене кĕртеççĕ. Каменск-Уральск хулин сăн-сăпачĕ пĕтĕмпех улшăннă. Кунта çĕнĕрен драма театрĕ туса лартнă. Кино-театра тĕпренех юсаса йĕркеленĕ, шоссе çулĕсем тунă, асфальтлă тротуарсем хывнă. Завод поселокĕсенче 7 кĕпер тунă, поселоксене илемлетме 40.000 тĕп йывăç лартнă. Урамсемпе площадьсене фонарсем çутатаççĕ. Халĕ трамвай линине тума тытăннă, çав лини завод поселокĕсене предприятисемпе сыхăнтарать. (ТАСС).

Норвеги правительстви Совет Правительствине янă послани

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Норвеги правительстви Совет Правительствине телеграфпа çакăн пек послани янă.

«Норвегие ирĕке кăларма пуçланă май Норвеги правительстви Совет Союзĕн Правительствипе халăхне ăшă кăмăлпа салам ярать. Тăватă çул ытла нимĕç агрессорĕсем Норвеги халăхне çаратса пусмăрласа пурăнчĕç. Норвеги халăхĕ Сталин Маршал ертсе пыракан совет çарĕсем паттăррăн та çĕнтерӳллĕ çапăçнине хавасланса палăртса пычĕ. Çак вăрçă çулĕсенче Совет Правительстви Норвегипе туслă пулнине, ăна кăмăлланине Норвеги правительстви пĕрре кăна мар курчĕ. Норвегин çурçĕрти районĕсенче пурăнакан халăх пирĕн Совет союзникĕн çарĕсене хăйсене ирĕке кăларакан çарсем тесе саламласа кĕтсе илĕ. Норвегин хĕçпăшаллă вăйĕсем çапăçусене хутшăнĕç, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан пĕрлехи кĕрешӳре мĕн вăй çитнĕ таран çапăçĕç. Норвегин çурçĕр пайне ирĕке кăларнине пĕтĕм Норвеги халăхĕ савăнса саламласа кĕтсе илĕ. Норвегин çурçĕр пайне ирĕке кăларни пирĕн икĕ çĕршыв хушшинчи туслăха тата вăйлăрах çирĕплетсе парĕ».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 28-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Халĕ союзниксен çарĕсем Зейд-Бевеланд çурутравĕн пĕтĕм кăнтăр пайне Крейиннген пунктĕнчен хĕвеланăçнерехри канал патне çитиччен хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Шельда шывĕ патĕнчи «михĕ» районĕнче союзниксен çарĕсем Греде ялне туртса илнĕ. Зейд-Бевеланд перешеекĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Берген-оп-Зоом хулине туртса илнĕ.

Антверпен хулипе Бреда хули хушшинчи çул çинче союзниксен çарĕсем Зендерт районĕ патнелле куçнă. Тильбург хулин хĕвелтухăçĕнчи тулашне йышăннă. Тильбург хулинчен çурçĕрелле куçса, союзниксен çарĕсем Лоон-оп-Занд патне çитнĕ. Кунтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем самаях малалла кайнă та Тильбург хулипе Бреда хули хушшинчи çула татнă. Гертогенбош хулине тăшмантан тасатнă хыççăн союзниксен çарĕсем хуларан хĕвеланăçнелле куçнă. Вогез тăвĕсен районĕнче тăшман хĕсĕнсе кĕме хăтланса пăхнă, анчах та ку ĕç ăнăçман.

Çанталăк начар тăнă пирки октябрĕн 27-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ вăйлă кĕрешеймен.

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Зейд-Бевеланд çурутравĕнче союзниксен çарĕсем Бевеланд каналĕ хыçĕнче тăшмана тапăнма тунă укрепленисене аслăлатнă. Шельда шывĕнчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Зейдзанде хули патне пырса çитнĕ.

Голландире союзниксен çарĕсем савăлланса кĕнĕ районран хĕвелтухăçнерехре, Майель хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре, тăшман контратакине сирсе янă.

Фронтăн Аахен хулинчен Парруа вăрманне çитиччен выртакан участокĕнче нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман. Аахенпа Монншау районĕнче патрульсем кĕрешнĕ.

Октябрĕн 28-мĕшĕнче ирхине нимĕçсен йывăр тупписем Люксембург хулине пенĕ. Эпиналь хули секторĕнче союзниксен çарĕсем Брюйер хулинчен кăштах хĕвелтухăçнелле куçнă. Тăшман ку районăн темиçе пунктĕнче тата Вогез тăвĕсем умĕнче тупăсемпе вăйлăн персе тăнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе кăнтăрла Кельн хулине тапăннă. Авиацин ытти соединенийĕсем Вальхерен утравĕ çине тата Голландипе Германири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх октябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем икĕ хутчен Берлина тапăннă. Тата унсăр пуçне Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 350 йывăр бомбардировщикне яхăн, 200 истребитель хӳтĕлесе пынипе, нимĕçсен Гамм хулинчи питех те пысăк сортировка станцине тата Мюнстер хулинчи сортировка станцине тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: октябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кельн хулине икĕ хутчен тапăннă. Бомбардировщиксем вĕçсе çитнĕ чухне Кельн хулинче ĕнерхи тапăну хыççăн тухнă пушарсем çаплах сӳнмен пулнă.

Самолетсен тепĕр соединенийĕ нимĕçсен Норвегири Берген хулинчи подводнăй лодкăсен базиçине бомбăсем пăрахнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çав мĕнпур операцисенче 1300 самолет ытла пулнă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсĕ таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 28-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Октябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Сириус» крейсерĕ çинчен аннă союзниксен çарĕсем Родос утравĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре выртакан Пископи утравне йышăннă.

Итали фронтĕнче пур тĕлте те лăпкă тăнă.

Çанталăк начар тăнă пирки октябрĕн 27-мĕшĕнче союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ вăйлах кĕрешеймен, вĕсем яланхи пек кăна патрульте çӳренĕ тата тăшман çулйĕрĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă.

Италире союзниксен çарĕсен патрулĕсем кăна кĕрешнĕ.

Çанталăк начар тăнă пирки октябрĕн 29-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ вăйлă кĕрешеймен. Авиацин пĕчĕкрех соединенийĕсем тăшманăн Германири тата Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

РУМЫНИРЕ НАЦИЛЛĔ-ДЕМОКРАТИЛЛĔ ФРОНТ ТУНĂ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Скынтейя» тата «Ромыния либера» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Румынире темиçе хулара нациллĕ-демократиллĕ фронт тунă демонстрацисем пулса иртнĕ, вĕсем Санатеску правительствине халех вырăнтан тухма тата нациллĕ-демократиллĕ фронтăн правительствине туса хума ыйтнă.

Калараш хулинче митингра пулнисем пурте пĕр саслăн пулса резолюци йышăннă, çав резолюцире вĕсем государство аппаратне фашистла çынсенчен тасатма тата перемири условийĕсене пурнăça кĕртме ыйтнă.

Резолюцисенче национал-царанистсен тата национал-либералсен партийĕсен пур членĕсене те нациллĕ-демократиллĕ фронта кĕме сĕннĕ.

Крайовăра вырăнти влаçсем демонстрацисене пур майпа та кансĕрленĕ.

«Трибуна попорулуи» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румыни королĕ партисен руководителĕсене хăй правительство тăвас ыйтăва часрах татса партарасшăн пулни çинчен каласа панă. «Курьерул» хаçат çапла çырать: октябрĕн 25-мĕшĕнче партисен делегацийĕсем çĕнĕ правительство тăвасси çинчен калаçнă. Хаçат каланă тăрăх, çав делегацисем правительствăн программи пирки калаçса татăлнă.

ГРЕЦИ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕР ТАРÇИСЕНЕ НАКАЗАНИ ПАМА ЫЙТАТЬ

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Афинăри халăх сутăнчăксене наказани пама ыйтать. Ĕнер Афины хули варринче «сутăнчăксене тавăрмалла» тенĕ лозунгпа демонстрацисем пулса иртнĕ. Афинăри хаçатсем сутăнчăксен ĕçĕсене пăхса тухма хăйне уйрăм судсем тăвасси çинчен декрет пичетлесе кăларнă. Çав декрет тăрăх, сутăнчăксен граждăн прависене тытса илнинчен пуçласа вĕсене персе вĕлерме те пултараççĕ.

ГЕРМАНИРЕ АСЛĂ ШКУЛСЕНЕ ÇАПЛАХ ХУПАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер влаçĕсем, «тотальнăй мобилизаци» тунă май, Германири аслă шкулсене çаплах хупаççĕ.

Фашистла нимĕç агентстви — Германин информаци бюровĕ çутĕç министрĕн распоряженине радиопа панă. Çав распоряженире халь ĕçлекен аслă шкулсен ĕçĕсене ансăрлатасси çинчен каланă. Çав аслă шкулсенче «1944—1945-мĕш вĕренӳ çулĕн хĕллехи семестрĕнче халь вĕренекен студентсене кирлĕ чухлĕ вăхăт хушши çеç вĕрентеççĕ. Пушаннă штатсемпе, çуртсемпе тата материалсемпе вăрçă валли усă кураççĕ».

Германи министерствин çав распоряженинче малалла çапла каланă: «Тата 5 специальнăй шкул, 77 факультет хупăнаççĕ. 12 факультетра хĕллехи семестр пĕтсен вĕрентме пăрахаççĕ. 38 факультетра аслă курссенчи студентсене çеç вĕрентеççĕ», тенĕ.

КĔСКЕН

● Америкăри «Лайф» журнал совет ученăйĕсем çинчен темиçе статья пичетлесе кăларнă. Çав журналра СССР Наука академийĕн чи паллă 26 членĕн сăнĕсене пичетленĕ. (ТАСС).

● Кăнтăр Англи районĕсем çине саккăрмĕш кас ĕнтĕ самолет-снарядсем вĕçсе параççĕ. Октябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вĕсем кăнтăр çыранри пĕр пунктра нумай çурта сиенленĕ е ишнĕ.

ПЕТЭН АРХИВНЕ ТУПНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Де фане-ла-Франс» хаçат çапла пĕлтерет: Виши хулинче Петэнăн хăйĕн архивне тупнă. Тĕрлĕ хутсем хушшинче гитлеровецсен пуçлăхĕсем, çав шутра Гитлер хăй янă çырусене тупнă. Политикăпа вăрçă пирки çырнă темиçе секретлă документ тупнă. Петэн архивне Парижа янă. Çав архива тĕплĕн пăхса тухсан, французсен чылай сутăнчăкĕсене—Гитлер тарçисене — тăрă шыв çине кăларма пулĕ, тесе шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти халь уçăлнă электромеханически техникум çынсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет:

Техникумра икĕ отделени пур: кăнтăрлахи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахса вĕренмелле) тата каçхи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахмасăрах вĕренмелле).

Техникумра виçĕ çул çурă вĕренмелле.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе хатĕрлет: 1) метала сивĕлле касса ĕçлекен техник-технологсене тата 2) электричествăллă аппаратсем тăвакан техник-электриксене.

Техникума вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ. 7-мĕш класран отличник пулса вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

9-мĕш класран вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса илеççĕ.

10-мĕш класран вĕренсе тухнисене хăйне уйрăм группăна илеççĕ, унта икĕ çул вĕренмелле.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, б) автобиографи тата в) паспорт (ăна техникума пырсан кăтартмалла).

Студентсене рабочисен нормипе снабжени параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Ытти хуласенчен килнисене общежитие вырнаçтараççĕ.

Техникумăн каçхи отделенине те заявленисем йышăнаççĕ.

Заявленисене куллен ирхине 10 сехетпе 14 сехет хушшинче тата каçхине 18 сехетпе 21 сехет хушшинче техникум çуртĕнче йышăнаççĕ. Техникум адресĕ: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—[illegible] промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00786.